Абрамов А. Кашлатăр Иванов вăрманĕ : [поэт çинчен] / А. Абрамов // Пионер сасси. – 1985. – 1 çĕртме.



# Кашлатăр Иванов вăрманĕ

Пелепейрен Глуховская станцине электропоезд вунпилĕк минутранах илсе çитерет. Станцирен Слакпуç инçех те мар. Сăрт айлăмĕнче лараканскер, аслă поэт ялĕ, ал тупанĕ çинчи пекех курăнса ларать...

Константин Васильевич Иванов... Вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ. Ун ятне чăвашсем çеç мар, нумай-нумай халăхсем сума сăваççĕ. «Нарспие» пăлхарла, венгрла, украинла, тутарла, пушкăртла, удмуртла, çармăсла, мордвалла вулаççĕ. Вырăсла ку поэмăна темиçе хутчен те куçарса пичетленĕ.

Нумай енлĕ пулнă сăвăç таланчĕ. XX ĕмĕрĕн малтанхи вунăçуллăхĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче творчествăллă юхăм вăйлăн аталанать. Ку пуринчен ытларах Константин Иванов пултарулăхĕнчен килнĕ. Вăл юрă-кĕвĕ тĕнчине юратакан Федор Павловна ăмăртмалла сĕрмекупăс каланă, мал ĕмĕтлĕ юлташĕсем пулăшнипе 1913 çулта Глинкăн «Иван Сусанин» оперине сцена çине кăларнă. Оперăра усă курнă картинăсемпе декорацисене те хăех ӳкернĕ. Çапла вара, вăл талантлă поэт кăна мар, пултаруллă художник та, музыкант та.

Алли ăста та сыпăçуллă пулнă унăн мĕн кăна туман пулĕ вăл. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекенсене ӳкерме, фото ĕсне, юрă ăсталăхне, сĕтелпукан тума вĕрентнĕ. Ивановран Иван Яковлевич та тĕлĕннĕ: поэт йывăçран пичетлекен машинка хатĕрлеме пултарнă-çке! Çамрăк ĕмĕрĕнче тем тума та ĕлкĕрнĕ Кĕçтенттин.

1912 çулта чăваш шкулĕсем валли сĕнĕ букварь хатĕрлеме тытăннă. Ку ĕçре К. Иванов чи хастаррисенчен пĕри пулнă. Вăл кĕнеке валли ача-пăчана килĕшмелле ӳкерчĕксем тунă. Хавхалансах М. Ю. Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă», «Парăс», А. В. Кольцовăн, Н. А. Некрасовăн, К. Д. Ушинскин сăввисене çав тери ăста куçарнă. Хресченсен пурнăçĕ çинчен пысăк эпопея (пурнăçри вăрăм тапхăра çутатса паракан пысăк произведени) çырма хатĕрленнĕ...

Халăх хăйĕн чаплă ывăлĕсемпе хĕрĕсене яланах сума сăвать. Иванов ячĕ те пирĕн чĕрере ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ.

Ĕрчевлĕ вăрлăх акаканĕ
Кайсан та, ĕмĕчĕ кайман.
Кашларĕ Иванов вăрманĕ,
Хитре вăрман, сĕм-сĕм
вăрман —
Чăваш поэзийĕн вăрманĕ,

çапла хак парать Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай улăп поэт пултарулăхне.

А. АБРАМОВ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: К. В. Ивановăн Слакпуçĕнчи музейĕ.

В. ЦЫФАРКИН
фотоӳкерчĕкĕ.